# Лайăх енне улшăнĕ-ши?

**Патшалăх структурисенче «Почта çыхăнăвĕ çинчен» çĕнĕ саккун проектне тишкерес ĕç пырать. Камăн интересĕсене тĕпе хывĕ-ха çак саккун? Ăна йышăнсан Раççей Почтине мĕнлерех çĕнĕлĕхсем кĕтĕç?**

Почтовиксен шухăшĕпе, саккун проекчĕ вĕсен ĕçне лайăх енне улăштармĕ. Наци почта операторĕсене пулăшас вырăнне Раççей минфинĕ ыйтнипе саккуна хатĕрлекенсем почта тăкакĕсене саплаштарни çинчен калакан пункта кăларса пăрахнă.

Хальхи вăхăтра почта çыхăнăвĕн универсаллă тивĕçтерĕвĕсем патшалăх çирĕплетнĕ тарифсем тăрăх пурнăçланаççĕ, хаксем, шел те, тивĕçтерӳсен расхутне саплаштараймаççĕ, патшалăх вĕсене туллин компенсацилемест. Ку таранччен çулсерен тивĕçекен субсиди виçи 6 млрд тенкĕпе танлашать, ытти 13 миллиард тенке яхăн тăкака предприятин хăйĕн саплаштарма тивет.

«Клиентсем пирĕнтен тивĕçтерӳ пахалăхĕ тата хăвăртлăхĕ ӳсессе кĕтеççĕ. Раççей Почти сервиса лайăхлатма тата çынсен ыйтăвне май пур таран пурнăçлама тăрăшать-ха, анчах предприятин çакăн валли укça-тенкĕ ниепле те çитмест, – пĕлтерчĕç саккун проекчĕ пирки Раççей Почтин Чăваш енри филиалĕнчен. – Ĕçлесе илнĕ мĕнпур укçан 70 процентне шалу çине каять. Шупашкарта кăна ĕç укçи пĕчĕк пулнăран почта уйрăмĕн кашни иккĕмĕш операторĕ улшăнчĕ. Кунсăр пуçне, филиал ялсенчи уйрăмсене те – вĕсенчен нумайăшĕ тăкаклă – тытса тăрать. Халиччен вĕсене сыхласа хăварма май килчĕ, анчах ыран патшалăх пулăшăвĕсĕр мĕн пуласси не калама йывăр. Енчен те бюджетран укçа-тенкĕ куçармасан предприятин мĕнпур тăкака хăйĕн саплаштарма тивет. Эппин, пирĕн почта уйрăмĕсене çĕнетесси, юсасси, инфраструктурине улăштарасси, шалăва ӳстересси пирки нумайлăха манма тивет».

Хальлĕхе уçăмлă хурав çук. Правительство хăш варианта суйласа илмелли пирки иккĕленет: е малашлăхсăр почта уйрăмĕсене палăртнă тарифсемпе тытса тăмалла, е почта операторĕн никĕсĕ çинче коммерци предприятине аталантармалла? Почта çыхăнăвĕн тивĕçтерĕвĕсемпе усă куракан нумай миллионлă аудиторийĕ çак ыйтăва татса парасса кĕтет.

О.ИВАНОВА.

# Хĕллехи стартра

**Кайри Тукай ялĕнчи çынсем пĕр пысăк çемьери пек пурăнаççĕ. Акă Çĕршыв хӳтĕлевçин кунĕнче ача-пăча та, çамрăксемпе ватă çынсем те хĕллехи старта йышлăн пухăнчĕç.**

Малтанах Николай Тельманович Петров уйрăм предприниматель парнисене çĕнсе илессишĕн биатлонистсем тупăшăва тухрĕç. Ку ял çыннисемшĕн çĕнĕ ăмăрту. Апла пулин те дистанцинче вĕсем çухалса каймарĕç. Çăмăл мар тупăшура Çĕрпелти вăтам шкулта вĕренекенсем çав тери çивĕч пулчĕç. Вĕсем хушшинче Максим Коршунов, Надежда Максимова, Елена Николаева, Люда Максимова хăйсен хастарлăхĕпе палăрчĕç. 7-мĕш класра вĕренекен Артем Максимов вара чи пултарулли пулчĕ.

Хыççăн çуран чупассипе ăмăртрĕç. Кунта та шкулта вĕренекенсене çитекенни пулмарĕ. Сергей Николаев – чи пултарулли, чи асли – 75 çулхи Иван Михайлович Михайлов.

Ăмăртусен хĕрӳллĕ саманчĕ винтовкăран тĕл перессипе иртрĕ. Тупăшăва 30-ăн ытла хутшăнчĕç, маттуррисем – Владимир Григорьев, Иван Николаев, Зинаида Максимова, Альберт Журавлев, Иван Михайлов. Футбол никам çĕнтерейменнипе вĕçленчĕ.

Çĕнтерӳçĕсене грамотăсемпе дипломсемсĕр пуçне тĕрлĕрен парнесемпе чысларĕç. Интереслĕ вăйăсене ирттерме «Совет офицерĕсен Союзĕ» обществăн Вăрнарти уйрăмĕ тата Çĕрпел ял администрацийĕ пулăшрĕç.

Н.ВАСИЛЬЕВ.

Кайри Тукай.

## Саламлатпăр!



**Çĕньял Хапăсра пурăнакан Петр Тимофеевич ТИМОФЕЕВ** мартăн 3-мĕшĕнче 80 çул тултарать. Эпир хаклă çыннăмăра чун-чĕререн юратса, чĕре çумне ăшшăн çупăрласа сумлă юбилейĕпе саламлатпăр. Кĕрекене пуçтарăннă çывăх тăванăмăрсем сана ырă сунса каланă ăшă сăмахсем чун-чĕрӳне ăшăтса тăччăр, малашне те пурнăç çулĕ тăрăх çирĕп утма çĕнĕ вăй хушса, хавхалану кӳччĕр. Пире савăнтарса, тĕрек парса 100 çулччен пурăнма сунатпăр. Ан кулян, аттемĕр, нихăçан та ан чирле, пирĕн телей те савăнăç санпа пĕрле. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр!

**Çуралнă кун килет çулталăкра пĕрре,**
**Юрла юратнă юрруна кĕрекере.**
**Кун-çул иртнишĕн кулянса пуçна ан ус,**
**Çут пуласлăха шанса эс çирĕп пус.**

*Мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, йышлă тăванĕсем.*

# «Вĕри йĕрпе» ярса илнĕ

**Тунти кун полици ĕçченĕсем Малти Ишекре вырăнти автопаркран металл япаласем, запас пайсем вăрлама хатĕрленнĕ виçĕ çынна çулса илнĕ. Виççĕшĕ те – ют районта пурăнакансем.**

**КРИМИНАЛЛĂ ХРОНИКА**

Полицейскисем Малти Ишеке çурçĕр иртсен, машинăпа трактор паркĕнче такам вăрттăн тустарни çинчен пĕлтерсен, килсе çитнĕ. Çак вăхăтра преступлени вырăнĕнче никам та пулман, анчах алăк умĕнче илсе тухма хатĕрленĕ япаласем (урапасем т. ыт. те) купаланса выртнă, «каçхи хăнасен» пăрахса хăварнă машини те мăн çултан инçех мар ларнă. Ахăртнех вĕсем, шикленсе ӳкнĕскерсем, хăвăртрах çывăхри вăрманта тарса çухалма васканă.

Вĕсенчен пĕрне оперативлă ушкăн «вĕри йĕрпе» тӳрех ярса илнĕ. Иккĕшне вара вăрманта шырама тивнĕ, анчах вĕсене те алăран вĕçертмен – полицейскисене пулăшма тепĕр ушкăн килсе çитнĕ хыççăн çийĕнчех тытса чарнă.

И.СЕРГЕЕВА.

# Кăрлач уйăхĕнчи кăтартусем

1. Усă куракан 100 гектар çĕр пуçне сĕт туса илнĕ (центнерпа). 2. 2012 çулта туса илнĕ. 3. Кашни ĕнерен сĕт суса илнĕ (килогрампа). 4. 2012 çулта сĕт суса илнĕ. 5. Усă куракан 100 гектар çĕр пуçне аш-какай туса илнĕ (центнерпа). 6. 2012 çулта туса илнĕ. 7. Майракаллă шултра выльăх йышĕ. 8. 2012 çулта пулнă. 9. Сăвакан ĕнесен йышĕ. 10. 2012 çулта пулнă. 11. Сыснасен йышĕ. 12. 2012 çулта пулнă.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

| | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| «Янгорчино» | 103,4 | 91,8 | 444 | 435 | 5,0 | 5,1 | 717 | 714 | 300 | 300 | – | 2 |
| К.Маркс ячĕллĕ | 72,4 | 69,3 | 393 | 376 | 7,0 | 2,3 | 876 | 892 | 285 | 285 | – | – |
| «Броневик» | 45,2 | 42,5 | 248 | 233 | 1,0 | 2,3 | 465 | 470 | 200 | 200 | – | – |
| «Мураты» | 30,5 | 27,2 | 448 | 426 | 1,5 | | 248 | 250 | 75 | 70 | – | – |
| «Хорнзор» | 30,1 | 30,0 | 258 | 257 | 3,3 | 0,5 | 167 | 161 | 100 | 100 | – | – |
| «Кольцовка» | 25,7 | 27,8 | 284 | 308 | | 4,8 | 432 | 479 | 170 | 170 | – | 637 |
| Вăрнарти аш-какай комбиначĕ | 24,9 | 22,7 | 362 | 357 | 23,2 | 20,6 | 1829 | 1440 | 500 | 460 | 14904 | 11763 |
| «Победа» | 24,6 | 25,8 | 258 | 270 | | 4,3 | 442 | 436 | 135 | 135 | – | – |
| «Знамя» | 20,1 | 19,9 | 241 | 238 | 2,5 | 0,9 | 322 | 332 | 135 | 135 | – | – |
| «Юнтапа» | 7,9 | 9,0 | 92 | 97 | 1,6 | 1,8 | 323 | 338 | 143 | 155 | – | – |
| «Феникс» | 4,9 | 8,0 | 63 | 113 | 0,4 | | 308 | 358 | 178 | 180 | – | – |
| «Агрохмель» | 6,2 | 15,9 | 157 | 359 | 4,8 | 11,7 | 168 | 252 | 66 | 83 | – | – |
| «Гвардеец» | – | – | – | – | – | 0,1 | – | 10 | – | 10 | – | – |
| «МТС» | – | – | – | – | – | – | – | – | – | – | 980 | 920 |
| «Луч» | – | – | – | – | 10 | 23,2 | – | – | – | – | – | – |
| **Районĕпе** | **23,2** | **23,1** | **298** | **296** | **7,3** | **6,8** | **6326** | **6166** | **2305** | **2303** | **15903** | **13369** |
| В.Яковлев ф. х. | – | – | 498 | – | – | – | 44 | – | 30 | – | – | – |
| И.Сергеев ф. х. | – | – | 430 | – | – | – | 56 | – | 20 | – | – | – |
| С.Лукина ф. х. | – | – | 380 | – | – | – | 35 | – | 11 | – | – | – |
| А.Козлов ф. х. | – | – | 355 | 430 | – | – | 48 | 18 | 22 | 10 | – | – |
| М.Тарасов ф.х. | – | – | 193 | 190 | – | – | 15 | 21 | 15 | 10 | – | – |

**ÇИВĔЧ ЫЙТУ**

# Хаяр шăршă ăçтан сарăлать?

Кăçал çил ытларах хĕвел тухăç енчен вĕрет. Пире, Вăрнарти Мелиораторсен урамĕнче пурăнакансене, çав енчен килекен хаяр шăршă шутлаттарма тытăнчĕ. Малтан январь вĕçĕнче килсе хупларĕ. Иртнĕ уйăхра вара çунăк шăрша виçĕ-тăватă хутчен туйрăмăр. Вăл шăмат кунпа вырсарни кун, 16 – 17-мĕшĕсенче, каллех сарăлчĕ. 22-мĕшĕнче çак нĕрсĕр шăрша çывăхри ялсенче пурăнакансем те туйнă терĕç.

Эпир пĕлнĕ тăрăх, хĕвелтухăç енче поселокăн тасатмалли сооруженийĕсем тата «Август» фирмăн Вăрнарти филиалĕн производство каяшĕсене тирпейлекен цехĕ вырнаçнă. Çак хаяр шăршă сăлтавĕ пирки тивĕçлĕ органсем хаçат урлă пĕлтерессе кĕтетпĕр.

**Мелиораторсен урамĕнче пурăнакансем.**

# Юбилей çулĕнче

Мăн Явăшри Ф.И.Ашмаров ячĕпе хисепленекен вăтам шкул юбилее хатĕрленет. Вăл 1893 çултан ĕçле пуçланăранпа 120 çул çитет. Уява ноябрь пуçламăшĕнче пухăнасшăн. Пĕлӳ тата Учитель кунĕсене çав ятпа чысланă. Ылтăн кĕр уявĕнче савăннă. Ашшĕ-амăшĕсене праçник туса панă. Çĕнĕ çултан вара пĕтĕм йышпа тăван Çĕршыв хӳтĕлевçин кунне хатĕрленме тытăннă. Çулленхиллех, çар вăййисен смотрне Мускавран Э.В.Васильев полковник килсе çитрĕ. Пулас салтаксемпе космонавтсем парада ăна хăйсен пултарулăхне туллин кăтартрĕç. Кăçал ку мероприятие 2-мĕш класрисем те хастар хутшăннă. Кашни отрядăн хăйĕн тумне-формине кăтартмалла, стройра харăссăн утмалла, командăсене уставрилле пĕр тикĕс пурнăçламалла, строй юрри янраттармалла т. ыт. те. Вунă çынлă жюрие тата куракансене (шкула çарпа тыл ветеранĕсене те чĕннĕ-çке-ха) хайхи кĕçĕннисем – 8-9 çултисем те хытă тĕлĕнтерчĕç, çар формине хăйсене манерлĕ шутласа кăларнипе 1-мĕш вырăна шăпах 2-мĕш класс йышăнчĕ. 8-мĕшĕнчисен отрячĕ хăватлă сатур юрăпа мала тухрĕ. Аслăраххисем хăть паянах çар ретне тăма хатĕр. Чи лайăх командир ячĕ 9-мĕш класри Маргарита Никифоровăна тивĕçрĕ. Эрик Васильевич никама та наградăсăр хăвармарĕ, пĕтĕмĕшле саламне çĕнтерӳçĕсене тепĕр хут кашнине алă тытса Хисеп грамотисем, парнесем тыттарнипе çирĕплетрĕ. Учительсен йышĕнче М.В.Ломоносов çуралнăранпа 300 çул çитнĕ ятпа кăларнă медале илекенсем те пулчĕç. Пĕлтĕртенпе хăйĕн те наградăсем чылай хушăннă, запасри полковникăн пархатарлă миссине вунă хутчен Тав хучĕпе, Дипломпа, Хисеп грамотипе асăнмалăх палăртнă. Вĕсен шутĕнче Мускав правительстви, «Северсталь» акционерлă общество, ЧР Патшалăх Канашĕ, ЧР Вĕрентӳ министерстви, ЧР Çар комиссариачĕ. «Çĕнтерӳçĕсен маршĕ» проекта пурнăçланăшăн, çарпа патриотла воспитани ĕçне пысăк тӳпе хывнăшăн...

«Сириус» пĕлтĕр çамрăк космонавтсен Раççейри отрячĕсен 7-мĕш слечĕнче Шуршăлта пулчĕ. Явăшсен ачисем: Леонид Федоров, Тимур Ильин, Лидия Фомина, Надежда Макарова унтан тĕрлĕ наградăсемпе таврăнчĕç, «Шыравçă» категориллĕ квалификацие тивĕçлĕ пулчĕç. Лилия Владимировăна чи аслăрах «Çăлтăр» категорипе чысланă.

Шкул коллективĕнче паян 126 вĕренекен, 20 учитель, 10-ăн – тивĕçтерӳ ĕçченĕсем. Пурте пĕр пулса, ноябрь тĕлне хăйсен летопиçне хатĕрлеççĕ. Унăн пысăкрах калăпăшне фотоматериал йышăнать. 1980 çултанпа вăтам шкул шучĕпе 527 çын вĕрентсе кăларнă. Çав хушăра: профессорсем – наука докторĕсем, çарпа флот офицерĕсем, ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем, тава тивĕçлĕ артистсем, Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти вăтам шкулсен директорĕсем... Коллектив (ачасем, учительсем) районти, республикăри смотрсене, конкурссене активлă хутшăнать. Пĕлтĕртенпе наци проекчĕсен икĕ конкурсĕнче çĕнтернĕ. Шкула ветерансен Пĕтĕм Раççейри Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ, Аслă Çĕнтерӳ ялавĕн чăн дубликачĕпе наградăланă. Учительсем çиччĕн пĕрремĕш квалификаципе, çулттăн аслă категорипе ĕçлеççĕ. Пултарулăха хăпартма тата ыттисене кăтартма тĕрлĕ майсем шыраççĕ, тупаççĕ. «Халăх шкулĕ» журналăн пĕлтĕрхи 4-мĕш номерĕнче директор Надежда Петровна Федорова «Верить в удачу, успеха во всем добиваться» статья, вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Зоя Петровна Казакова «Шкул юратуран пуçланать» тишкерӳ пичетленĕ. Тăван çĕре çитсе курнă хуравĕш, ман вара хам енчен шкулăн çывхаракан юбилейĕ ячĕпе литература конкурсĕ ирттермешкĕн калаçса татăлма май тупăнчĕ.

М.ВАСИЛЬЕВ.

# Пире чума кирлĕ мар

Ку чир çинчен нумай çыраççĕ, телевизорпа та кăтартаççĕ. Африка чуми – питĕ хăвăрт сарăлакан хăрушă инфекци чирĕ шутланать, вăл килти хушма хуçалăхри пур ӳсĕмри сыснасене тата хир сыснисене ерет, 7–10 кун хушшинче вĕлерет. Чирлĕ выльăха эмелсемпе сыватма çук. Прививка тума ятарлă вакцина та тупайман-ха. Чире пуçараканĕ – вирус – тĕрлĕ температурăна чăтăмлă. Тăпрара та, çĕрнĕ тислĕкре те упранать. Çавăнпа та сыснасен усал чирĕ çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те сиксе тухма пултарать. Вирус тĕлĕрмест. Кăçал кăрлач уйăхĕнче Ярославль облаçĕнче хир сыснисем чирленине 2 хутчен те тупса палăртнă. Пĕлтĕр тĕрлĕ вырăнсенче 12 хутчен регистрациленĕ.

Инфекци чирлĕ сыснасенчен е вилнĕ сыснаран сĕлехе, юн, каяш, апат урлă тата юнашар тăратсан та ерме пултарать. Ку чир ытти выльăхсемшĕн хăрушă мар, çынна та ермест. Сыхланасси ытларах хамăртан килет. Килти хушма хуçалăхра тата сысна ĕрчетес енĕпе ĕçлекен организацисенче питĕ сыхă та асăрхануллă пулмалла. Витесене хупă тытмалла, сыснасене ирĕке кăларма юрамасть. Выльăх витине аякран килекен хăнасене, транспорта кĕртмелле мар. Алăк патĕнче ялан дезинфекци материалĕсем пулмалла. Витене таса тытмалла, стенасене шуратмалла, вăхăтра дезинфекци тумалла. Ку питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Сысна çурисене шута илмелле, классика чуминчен прививка туса тăмалла. Килте сысна чирлерĕ пулсан çийĕнчех вырăнти ветеринара пĕлтермелле.

Россельхознадзор кăтартăвĕсем тăрăх, юлашки 5 çул хушшинче çак чир патшалăха 25 миллиард тенкĕлĕх сиен кӳнĕ. Хамăр таврари хир сыснисене шута илмелле, ытлашши ĕрчеме памалла мар. Чире ытларах вĕсем сараççĕ.

**Г.ИВАНОВА,**
**Уйкас Кипекри ветеринари участокĕн заведующийĕ.**

